Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

88 (7728) № ✻ Ытлари кун, 2009 çулхи ноябрĕн (чӳк) 3-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ноябрĕн 4-мĕшĕ – Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ

ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Сире Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

«Пĕр пĕччен пĕкĕ те аваймăн», – тет халăх сăмахлăхĕ. Ĕмĕртен пыракан чăнлăх ку. Пĕрле пурнăçланă пысăк тата пĕчĕк ĕçсемсĕр пуçне халăха ытларах пĕрлештерекен вăй çук. Пĕрлехи пысăк тĕллевсем, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрса ĕçлени, çирĕплĕхпе шухăш-ĕмĕт вăйĕ малалла аталанас çул çинче йывăрлăхсене çĕнтерсе пыма вăй параççĕ.

Тĕрлĕ кризиссене пăхмасăрах паян пире сирĕнпе пĕрле пулса ĕçленĕрен республикăна тăнăç аталану çулĕ çинче тытса пыма хевте çитсе пырать. Промышленность сферинче, ял хуçалăхĕнче, обществăлла инфраструктурăра, вĕрентӳпе сывлăх сыхлавĕнче тата культурăра çĕнĕ проектсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Авторитетлă экспертсемпе РФ Правительствин хаклавĕсемпе Чăваш Республики Раççейри эффективлă ĕçлекен 5 регион шутне кĕрет. Ку вăл республикăра пурăнакансен пĕрлехи тăрăшулăхĕ, профессионализмпа яваплăхĕ, тăван ене юратни.

Мĕн тунипе лăпланни те пире тивĕçтермест. Çакна ăнланса пирĕн татах та интенсивлăрах ĕçлемелле, вăйсене пĕрлештерсе çĕнĕ ӳсĕмсене çĕнмелле. Çакна пурнăçлама сире пурсăра та çирĕп сывлăх, вăй-хал, телей те юрату сунатăп!

Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.

ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!
МУРКАШ РАЙОНĔН ÇЫННИСЕМ!

Сире пурне те çывхарса килекен Раççейри Халăх пĕрлĕхĕн кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Çак уяв пире тĕрлĕ наци çыннисен килĕшӳлĕхĕпе халăх пĕрлĕхĕ мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлине кăтартса парать.

Пĕрле чухне çеç йывăрлăха çĕнтерме, умри тĕллевсене пурнăçлама пулать. Паян пĕтĕм тĕнчери финанс кризисĕ вăхăтĕнче никамах та çăмăл мар. Эпир малашне те пĕрпĕринпе килĕштерсе пурăнсан, пĕр тĕллевлĕн, пĕр-пĕрне ăнланса вăй хурсан, кашни хăйĕн ĕç вырăнĕнче чунне парса ĕçлесен, йывăрлăхсене çĕнтеретпĕрех. Çакăн пек чухне çеç çĕршывăмăр, районăмăр татах та вăйлăрах, тĕреклĕрех пулĕ. Çакна пирĕн ку таранччен туса ирттернĕ ĕçсем те çирĕплетсе параççĕ. Пурнăçламалли вара пирĕн паян сахал мар. Ăнланулăх, пĕрлĕх малти вырăнта пулмалла пирĕн.

Малалла та пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнасчĕ, пĕрпĕрне хисеплесчĕ, ăнланасчĕ, пĕр тĕллевлĕн ĕçлесчĕ. Вара мĕн палăртни пурнăçланĕ. Пурне те çирĕп сывлăх, килĕшӳ, ăнлану, телей, юрату, вăрăм кун-çул сунатăп.

Район пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ.

Халăх пĕрлĕхпе хăватлă

2004 çулхи сентябрĕн 22-мĕшĕнче Мускав Патриархĕн Паломничество центрĕнче тĕнсем хушшинчи Раççейри канашăн 18-мĕш ларăвĕ иртнĕ. Ку вăл обществăлла организаци, çĕршыври 4 тĕп тĕн лидерĕсене пĕрлештесе тăрать. Унта актуаллă темăсене, Бесланри террористла акта сӳтсе явнă май, ноябрĕн 4-мĕш кунне пĕтĕм халăх уявĕн статусне пама пуçару тунă.

«Паян Раççей йывăр тĕрĕслевсен тапхăрне чăтса ирттерет,– палăртнă тĕнсем хушшинчи Раççейри канашăн заявленийĕнче.– Пирĕн халăха хирĕç террористла вăрçă пуçарса яракансем çакă пăтрашу çуратĕ, халăх Раççей малашлăхне шанма пăрахĕ тесе шутлаççĕ. Çак вăрçăра эпир çĕнтерме тивĕç, пĕрле пулсан çĕнтеретпĕр те».

Пĕтĕм нацин çĕнĕ уявĕ тесе ноябрĕн 4-мĕшне палăртнă. Ăна 1612 çулхи ноябрĕн 4-мĕшне халаллана. Ун чухне Мининпа Пожарский ертсе пынипе халăх ополченийĕ Мускава ирĕке кăларнă, ăс-хакăлпа нравственноçăн тарăн кризисĕнчен тухма çул уçса панă. РФ Патшалăх Думи пăхса тухма палăртнă «Çар мухтавĕн кунĕсем çинчен» Саккун проекчĕ çумне çырса панинче вара çапла палăртнă пулнă: «Мининпа Пожарский ертсе пынипе халăх ополченийĕ Мускава Польша интервенчĕсенчен ирĕке кăларнă май, çынсем кам пулнине, мĕнле тĕне ĕненнине тата обществăра мĕнле вырăн йышăннине пăхмасăр пĕрле пулса халăхăн паттăрлăхĕн тĕслĕхне кăтартса панă».

Ĕмĕрсем тăршшĕпе пирĕн халăхăн йывăр вăхăтсене сахал мар чăтса ирттерме тивнĕ. Çапах эпир кашни хутĕнчех Тăван çĕршыва юратнипе, Турăна шаннипе, халăхăн ăс-хакăл хаклăхĕн традицийĕсене тытса пынипе пĕрлешме вăй-хал çитернĕ. Инкексене сирсе ярса хамăрăн никама пăхăнманлăха, патшалăх тытăмне сыхласа хăварнă.

Çакăнта – пирĕн халăхăн ăс-хакăлăн пысăк паттăрлăхĕ. Çакăнта – унăн вăй-халĕ. Çакăнта – унăн малашлăхĕ!

Уява халалласа

Кăçалхипе пиллĕкмĕш хут паллă тăватпăр эпир Халăх пĕрлĕхĕн кунне. Район шайĕнче пĕтĕмĕшле мĕнле уявлатпăр-ха çак куна? Мĕнле мероприятисем ирттерме палăртса хунă? Çак ыйтусене район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне, культура тата архив пайĕн ертӳçине А.Е. АНДРЕЕВАНА патăмăр:

– Çак уява çĕршывĕпех паллă тăваççĕ. Мĕншĕн тесен Раççей историйĕнче 1612 çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ ĕçсем малашлăхшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Уява халалласа вара районта та интереслĕ мероприятисем иртеççĕ. Акă ноябрĕн 2-мĕшĕнче нумай çул хушши Мăн Çĕнтĕр райповĕн председателĕ пулса ĕçленĕ РСФСР суту-илĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченне В.А. Колбасова асăнса çак райпо администрацийĕн çурчĕ çинче асăну хăми вырнаçтартăмăр. Çак пултаруллă çын пурăннă пулсан 75 çул тултаратчĕ.

Паян вара Катькасри врач амбулаторийĕнче пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕ хута кайĕ. Яракра Культура çурчĕ те паянтанпа таврари çынсене валли хăйĕн алăкĕсене уçĕ. Çапла вара уяв ячĕ майлах, халăха пĕрлештерекен тепĕр çурт та ĕçлеме пуçлĕ. Каламалла, ноябрĕн 3-4-мĕшĕсенче кашни ял тăрăхĕнчех савăнăçлă лару-тăрура пухусем иртеççĕ, концертсем пулаççĕ.

Наци радиопа уява халалланă район передачисене те итлеме пултараççĕ çынсем. Библиотекăсенче выставкăсем йĕркеленĕ ĕнтĕ, вĕсенче тата çавра сĕтелсем те иртмелле. Пур çĕрте те интереслĕ мероприятисем план тăрăх пулса пыраççĕ.

– Район центрĕнче вара савăнăçлă пуху хăçан иртет-ши?

– Муркашра çак пуху Культура çуртĕнче ноябрĕн 3-мĕшĕнче каçхи 6 сехетре пуçланать. Уява, паллах, пурне те йыхравлатпăр. Кунта «Пĕрлĕхре – вăй» кĕнеке выставки ĕçлĕ. Муркашри искусство шкулĕнче вĕренекенсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарса кураканснене саламлĕç. Уява халалланă пухăва район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов, Муркашри Владимир Турă Амăшĕн турăшĕн чиркĕвĕн настоятелĕ Федор иерей, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин тата ыттисем те хутшăнĕç. Пухăннисене ветерансен хорĕн концерчĕ те кĕтет.

Пурне те уяв ячĕпе саламлатăп, çавăнпа пĕрлех вырăнта иртекен мероприятисене активлă хутшăнасса шанатăп.

Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.

Хисеплĕ çынна асăнса

Асăну хăми уçрĕç

Районти пултаруллă та хастар ĕçчен, хăйĕн пĕтĕм пурнăçне суту-илӳ ĕçне, Мăн Çĕнтĕр райпо системине палăрăмлă çĕнĕ пусăма çĕклес ĕçе панă Василий Алексеевич Колбасов пурăннă пулсан çак кунсенче 75 çул тултаратчĕ. Шашкарвăрри ялĕнче çуралнăскер, 1958 çултанпа потребкоопераци системинче ĕçлеме тытăннă. Малтанах Ильинка ялповĕнче кладовщикра, кайран товароведра тăрăшнă.

1963 çултанпа Мăн Çĕнтĕр тата Муркаш райповĕсен правлени председателĕн çумĕнче тăрăшнă. 1978 çултанпа вăл пĕр улшăнмасăр Мăн Çĕнтĕр райповне ертсе пынă, райпо канашĕн председателĕ пулнă. Çав çулсенче ĕнтĕ райпо коллективĕ потребительсен обществисем хушшинче республикăра кăна мар, Раççей шайĕнче те пĕр хут кăна мар малтисенчен пĕри пулнă, дипломсемпе хаклă парнесене тивĕçнĕ.

Василий Алексеевич «Чăваш АССР тава тивĕçлĕ суту-илӳ ĕçченĕ», «РСФСР тава тивĕçлĕ суту-илӳ ĕçченĕ» хисеплĕ ятсене тивĕçнĕ, унăн ятне районăн Хисеп кĕнекине кĕртнĕ.

Хисеплĕ ĕçчене сума суса ĕнер Мăн Çĕнтĕр райпо правленийĕн çурчĕ çине Асăну хăми вырнаçтарчĕç. Ăна уçнă çĕре район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕ В.М. Павлов, унăн çумĕ Л.Л. Абрамова, В.А. Колбасовăн мăшăрĕ Елена Васильевна, ывăлĕпе хĕрĕ, Мăн Çĕнтĕр райповĕнче ĕçлекенсем, ял çыннисем хутшăнчĕç.

Унтан Асăну хăмине уçакансем В.А. Колбасов вил тăпри çине çитсе пуç тайрĕç.

Саламлатпăр

Хисеплĕ те хаклă çыннăмăра – **Виталий Гурьевич ИВАНОВА** – Орининти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул директорне – 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн, хĕрӳллĕн саламлатпăр. Сире иксĕлми вăй-хăват, таса çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, сурпан пек вăрăм кун-çул тата мĕн пур ырă кăмăлтан ĕçре пысăк çитĕнӳсем, пурнăçра ăнăçу сунатпăр. Ӳтас çулу такăр пултăр, ĕмĕтӳсем пурнăçланса пыччăр, çемьере тăнăçлăхпа телей пулччăр.

Пархатарлă çирĕп сывлăх сунса, сире хисеплесе те юратса **Орининти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкул ĕçтешĕсемпе вĕренекенĕсем.**

Муркашра пурăнакан **Валериан Иосифович СЕМЕНОВА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн, мĕн пур кăмăлтан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ĕçре ăнăçу, килте яланах килĕшӳ, çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул пултăр.

Саламлаканĕсем: юратнă мăшăрĕ, ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕ, тăванĕсем, тус-юлташĕсем.

Пирĕн юратнă аннене, кукамая, мамака – Муркашра пурăнакан **Анна Алексеевна СЕМЕНОВАНА** 80 çулхи юбилей ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, эсĕ пурришĕн савăнатпăр. Санăн ăшă та ырă кăмăлу пурин валли те çиттĕр. Ачусемпе, мăнуксемпе, тăванусемпе савăнса пурăнма тулли телей сунатпăр.

Саламлаканĕсем: ывăлĕсем, хĕрĕсем, кинĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.

Чуманкасси ялĕнче пурăнакан **Наталия Ефимовна КАДЫКОВАНА** ноябрĕн 5-мĕшĕнчи 80 çулхи юбилей ячĕпе, унăн хĕрне **РОЗĂНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе, Ятман ялĕнче пурăнакан мăнукне **ИРИНĂНА** 21 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, вăрăм кун-çул, юрату сунатпăр. Кукамая – канлĕ ватлăх.

Саламлаканĕсем: ачисем, кинĕ, кĕрӳшĕсем, 15 мăнукĕ, 8 прамăнукĕ, пĕтĕм тăванĕсемпе кӳршисем.



Хаклăран хаклă çыннăмăра – аннене, хунямана, кукамая, мамака, тăхлачăна, çывăх тăванăмăра – Хорнуй ялĕнче пурăнакан **Евдокия Васильевна СМИРНОВАНА** ноябрĕн 1-мĕшĕнче 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эпир сана юрататпăр, сана тав туса сан умăнта çĕре çити пуç таятпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, лăпкă пурнăç сунатпăр.

Саламлаканĕсем: виçĕ хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, 2 ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем, хăти-тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.

Кĕскен

Халăх çыравĕ 2010 çулта пулать

Раççей Правительствин Президиумĕ октябрĕн 29-мĕшĕнче çапла решени йышăннă: Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне 2010 çулхи октябрь уйăхĕнче ирттермелле.

Тĕрлĕ сăлтавсене пула маларах çырава 2013 çула куçарма палăртнăччĕ. Çапла вара чи малтан çырава 2010 çулта ирттерме пăлăртни çинчен калакан йышăну вăйра юлать.

Правительство кун пек йышăну туни ăнсăртран мар-тăр. Çырава хатĕрленсе ку таранччен сахал мар ĕç тунă, укçа-тенкĕ те сахал мар тăкаклана.

Налук инспекцийĕнчен пĕлтереççĕ

Парăмçăсен шучĕ те, парăмĕсем те пĕчĕк мар

Кăçалхи 9 уйăхра Муркаш районĕпе бюджета тата бюджетлă мар фондсене тӳлевсем пĕтĕмпе 186034 пин тенкĕ куçарса панă. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, ку вăл 87,6 процент пулать. Федераллă бюджета налуксем 26678 пин тенкĕ (94 процент), республика бюджетне 29802 пин тенкĕ (49 процент), вырăнти бюджета 59230 пин тенкĕ (99 процент), бюджетлă мар фондсене 70324 пин тенкĕ (111 процент) куçарнă.

Вырăнти бюджета куçарнă суммăран ытларах пайĕ уйрăм çынсен тупăшĕ çине хуракан налук – 47997 пин тенкĕ (81 процент), уйрăм çынсен пурлăхĕ çине хуракан налук – 929 пин тенкĕ (1,57 процент), çĕр налукĕ – 3484 пин тенкĕ (5,88 процент), тупăш çине хуракан пĕрлехи налук (единый налог на вмененный доход) – 5763 пин тенкĕ (9,73 процент).

Çулталăк пуçланнăранпа налуксем тӳлессипе парăмсем 2774 пин тенкĕ чухлĕ ӳсрĕç, 2009 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 17012 пин тенкĕпе танлашрĕç. Вăл шутран федераллă налуксем енĕпе – 9736 пин тенкĕ (вăл шутра 3263 пин тенкĕ – НДФЛ енĕпе парăм), регион налукĕсем енĕпе – 2776 пин тенкĕ, вырăнти налуксем енĕпе – 1912 пин тенкĕ, ятарлă налук режимĕллĕ налуксем енĕпе – 2588 пин тенкĕ.

Татман парăм налуксем тӳлессипе 356 пин тенкĕ ӳсрĕ, 2674 пин тенкĕпе танлашрĕ, вăл шутран вырăнти налуксем енĕпе 548 пин тенкĕ.

(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).